Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе малтисенчен пĕри

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Çаксене пĕтĕмпех шкул директорĕ Викентий Фомин патшалăх пуçлăхне хăпартлануллă кăмăл-туйăмпа кăтартнă. Владимир Путин шкулти тăватă кабинетра тата медиатекăра пулса курнă. Педагогсем патшалăх пуçлăхне физикăпа математика, гуманитари, экономикăпа социаллă тата биологипе хими енĕсемпе профиль вĕрентĕвĕ çинчен каласа панă, хăйсен шкул сайтне кăтартнă. Туяннă куçăмлă класа шута илсен шкулта пĕтĕмпе ĕç вырăнĕсен шучĕ 48-а çитнĕ. Çĕршыв Президенчĕ килсе кайнă хыççăн вĕсен шучĕ татах 14 ӳснĕ – шăпах çавăн чухлĕ хальхи чи çĕнĕ компьютер парнеленĕ Владимир Путин шкула. Паянхи куна вĕсем – республикăра чи лайăххисем.

Учительсем çĕршыв Президентне шкулта вĕренекенсем тĕрлĕрен конкурссене активлă хутшăнни, кунта тĕрлĕ шайри интеллектуаллă пултарулăх, спорт ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçисемпе призерĕсем пулни пирки каласа панă. Вĕренекенсене пĕлӳ илнипе пĕрлех пур енлĕн аталанма кунта пур условисене те туса панă: шкулти физкультурăпа спорт комплексне яланхи пек спорт залĕсĕр пуçне кĕрешекенсен, чупакансен тренажер залĕсем, хăйне евĕр оборудованисемпе тивĕçтернĕ уçă вырăнти спорт площадки, йĕлтĕр бази кĕреççĕ.

Тепĕр палăрăмлă саманта та асăнса хăвармалла. Ялти çак шкултан вĕренсе тухакансем çуллен пĕрлехи патшалăх экзаменĕнче лайăх кăтартусем тăваççĕ. 2007 çулта шкултан вĕренсе тухакансенчен 83 проценчĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе техникумсене вĕренме кĕнĕ. Çакă пулса тăрать те ĕнтĕ вăл пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕ пурнăçа кĕрсе пынин курăмлă кăтартăвĕ.

Владимир Путин киличченех шкулпа Раççей вĕрентӳ министрĕн çумĕ Владимир Фридлянов паллашнă. Вăл хăй мĕн курнине çапла хак панă: «Ялсенчи сахал мар шкулсенче пулса курнă, анчах та кун пеккине пĕрремĕш хут куратăп. Ятарласа кăтартмасăрах кунта пысăк ялти шкул ачи валли мĕн кирли пĕтĕмпех пур. Спортзал та, хальхи кабинетсем те. Тата мĕн интересли – ку шкулта ултă вĕренекен пуçне пĕр компьютер тивет, çĕршывĕпе вара пĕр компьютера 24-ăн пайлаççĕ».

Чăваш чĕлхин учителĕ чăваш юррине чуна пырса тивмелле юрласа панă. Ку сюжета федераллă пур каналсемпе те кăтартнă. Ахальтен мар ĕнтĕ патшалăх пуçлăхĕ хăй те чăваш чĕлхине вĕренес кăмăл çуралнине пĕлтернĕ. Раççей Президенчĕ куçăмлă компьютер класĕпе интересленсе паллашнă. Унта 11 ноутбук, вĕсене урапаллă сĕтелсене майлаштарса вырнаçтарнă. Кирлĕ чухне кирек хăш кабинета та куçарса кайма пулать. Çак тĕлĕнтермĕш техникăна президент гранчĕпе туяннă. Президент шкула пынă тĕле шкулти тăватă учитель çине тăрсах ноутбуксемпе ĕçлеме хăнăхнă. Вĕсенчен пĕри патшалăх пуçлăхне çапла пĕлтернĕ: «Юлашки вăхăтра ĕçлеме пушшех те интереслĕ. Тĕрĕссипе пенсие кайма та инçе мар ĕнтĕ, хамăн вара ĕçлесех килет».

Шкулти актовăй залра Владимир Путин Чăваш Республикинчи, Чечняри, Белгород тата Калининград облаçĕсенчи педагогика общественноçĕн представителĕсемпе интернет-конференци ирттернĕ. Путин «Вĕрентӳ» приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртесси епле пынипе интересленĕ. Учительсем наци проекчĕн ырă енĕсем, тăкаксем пирки каласа панă. Владимир Путин вара педагогсем мĕн каланине итленĕ май вĕрентӳ ĕçне çĕнетсе пырасси малашне те пулса пырасса шантарнă. Наци проекчĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пайĕ шкулсене вĕренекенсен йышне кура финансласси пулса тăрать. Ку принциппа Чăваш Республикинче пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ усă кураççĕ. Шкулсене финансламалли çĕнĕ методика, палăртнă патшалăх пуçлăхĕ, бюджетран ытларах укçа-тенкĕ уйăрма ыйтать, патшалăх çапла тума тивĕç те. Çапла вара шкулсене наци проекчĕсемпе пырса кĕнĕ пысăк укçасем вĕсем пуçламăшĕ кăна. Унпа пĕрлех Президент çавна та палăртнă: наци проекчĕн пĕлтерĕшĕ шкулсене укçа-тенкĕпе кăна мар, мораль тĕлĕшпе те пулăшасси пулса тăрать. «Ăна пурнăçа кĕртни,– палăртнă Владимир Путин,– пире тĕп задачăсенчен пĕрне – учитель ĕçне мĕн чухлĕ ĕç пурнăçланипе кăна мар, вĕрентӳ пахалăхне, кашни вĕренекен тĕлĕшпе тимлĕ пулнине кура хаклассине татса пама пулăшĕ».

Чăваш Республикинче курни-илтни Раççей Президентне савăнтармаллипех савăнтарнă. Çавăнпах ĕнтĕ вăл тепĕр кунне Белгород-ра Пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсем тата демографи политики енĕпе ĕçлекен канаш ларăвне уçнă май чăваш учителĕсемпе медикĕсен ĕçне пысăк хак панă, Чăваш Ене наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе лидер тесе палăртнă. Кунпа пĕрлех вăл çавна та кăтартса хăварнă. Республикăра наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессине хăйсен регионти аталану программисемпе çыхăнтарса туса пыраççĕ, кунта отрасльсенчи системăллă улшăнусем пуçăннă. Чăваш Ен ертӳçисен тата пысăк професси коллективĕсен нумай вăхăтлăх ĕçĕсĕр пулма пултарайман ĕнтĕ патшалăх пуçлăхĕ курнă çак çитĕнӳсем. Чи малтанах – Тренккассинче.

В. БРИГ.

Сăн ӳкерчĕксенче: Владимир Путин Тренккассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта.

Мĕн ĕçлетĕн, культура ĕçченĕ?

Пирĕн патра пурнăç интереслĕ

Хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕр ялĕнчи библиотека – информацип культура тата кану центрĕ. Унта компьютерсем, аудиопа видеотехника, вĕренӳ программисем, пĕлӳ паркан компакт-дисксем тата видеоматериалсем нумай. Тĕрлĕ мероприятисене хатĕрленнĕ тата ирттернĕ чухне вĕсемпе библиотека анлă усă курать.

Çулталăк хушшинче библиотека фончĕ çĕнĕ кĕнекесемпе тулчĕ. Çулталăк пуçламăшĕнче пирĕн библиотека ача-пăча кĕнекисен 2 комплектне (202 экз.) "Пушкинăн библиотеки" ятлă Мускаври фондран илчĕ. Çав кĕнекесене илме Мăн Сĕнтĕрти предприятисемпе организацисем спонсорла пулăшу пачĕç. Унсăр пуçне "Ырă чунăн хаклă парнисем" тата "Сана – манăн библиотека" пулăшу паракан акцисем ирттнипе библиотека фончĕ кĕнекесемпе тулчĕ.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан вĕренсе тухакансем библиотекăна 50 ача-пăча кĕнеки парнелерĕç. Регионти "Единая Россия" парти уйрăмĕн членĕсем хутшăннипе иртекен "Сана – манăн библиотека" пулăшу паракан акци тĕрлĕ содержаниллĕ 130 кĕнекепе библиотека фондне ӳстерчĕ. Мăн Сĕнтĕр салинче пурăнакан "Единая Россия" парти членĕсем пурте хутшăнчĕç. Пулăшу паракан акцие пĕтĕмлетсе кĕнеке выставки йĕркелерĕмĕр, çавăн хыççăн вулакансем библиотекăна татах кĕнекесем парнелеме кăмăл турĕç. Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан В. Шуткина, Т. Мясникова, Л. Петрована, С. Сапожникована çав акцие активлă хутшăннăшăн тав сăмахĕ калас килет.

Краеведени, экологи, çарпа патриотика ĕçне тата çемье йĕркелес тĕлĕшпе библиотека тарăннăн ĕçлет. Çемье вулавне анлăлатас тесе çулталăк пуçламăшĕнче "Чи нумай вулакан çемье" конкурссем ирттерме шут тытрăмăр. Çулталăк вĕçĕнче çĕнтерӳçĕсене Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн администрацийĕ парнесем парĕ. Библиотека краеведени ĕçне лайăх йĕркеленĕ, ял, ялти организацисемпе предприятисен историне, Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи паллă çынсем çинчен материал нумай пухнă. Вĕсене библиотекăн сайтне лартнă. Çак материалпа мероприятисене, электронлă презентацисене хатĕрленĕ чух та усă курса пырăпăр.

Пухусенче ял çыннисем «Мăн Сĕнтĕр сали. Авал. Паян. Ыран», "Наци проекчĕсем пурнăçа кĕреççĕ", "Çĕре упрамалла – вăл пирĕн кил" электронлă презентацисем курчĕç. Унсăр пуçне эпир илемлетнĕ ялти чапа тухнă çынсен юбилейĕсене хатĕрлетпĕр. Тĕслĕхрен: "Поэзи çуначĕ çинче" – П. Воробьев поэтăн 60 çулне халалланă, "Пĕтĕм пурнăç – пултарулăх" – Родион Петров композитор 50 çул тултарнă тĕле, "Тăван ен кĕввисем" – Илья Афанасьев педагогăн тата художникăн ӳкерчĕкĕсен выставкине халалланă.

Илья Петрович Афанасьев художника, шкулти ӳкерӳ урокĕн вĕрентекенне Ирина Геннадьевна Александрована, Валентина Зиновьевна Афанасьевана художник-дизайнера вулакансем пĕтĕм кăмăлтан тав тăваççĕ, вĕсен ӳкерчĕкĕсене библиотекăн фойинче курма пулать. Вулакансем çак художниксен пултарулăхĕпе, ĕçĕпе паллашрĕç, ӳкерчĕксем çине пăхса тăван вырăнĕсене, пейзажсене уйăрса илчĕç.

Эпир хамăр ĕçре Шупашкарти наци библиотекин тата Муркаш библиотекин электронлă базисемпе усă куратпăр. Практикăра документсене электронлă майпа илсе çитеретпĕр. Çак майпа ялти специалистсем те усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, П. Воробьев агроном "Колорадо нăррипе кĕрешмелли биопрепаратсем", В. Гуменков Мăн Сĕнтĕр почта тракчĕ çинчен Шупашкарти наци библиотекине статьясем ыйтса ячĕç, тепĕр куннех статйисене алла илме пултарчĕç пирĕн библиотекăра.

Библиотекăра медиатика пулни видеоуроксем, семинарсем, тĕл пулусем ирттерме пулăшать. Çитес кунсенчех библиотека ветерансемпе тата çамрăк суйлавçăсемпе çавра сĕтел тавра тĕл пулусем ирттерме хатĕрленет. Çитес суйлав пирки информаци материалĕсем: стенд, папка-досье, буклетсем хатĕрлет.

Хаçат-журнал çырăнса илмелли вăхăт çывхарса пынăран пурте çак ĕçе вăхăтра туса юлма укçа-тенкĕ пирки пăшăрханаççĕ. Эпир 12 тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илетпĕр, анчах та вулавçăсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесен вĕсен йышĕ нумайрах пулсан аванрахчĕ.

С. СОКОЛОВА,
Мăн Сĕнтĕр библиотекин заведующийĕ.

Отчетсем тăратассипе – çĕнĕлĕх

Малта пыракан технологипе усă курса

Раççей федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, налук тӳлесе тăракансен хальхи вăхăтра налук тата бухгалтери отчечĕсене малта пыракан технологисемпе усă курса çыхăну каналĕсемпе тăратма май пур. Отчетсене электронлă майпа тăратасси ансат та малашлăхлă.

Ку технологи инспекцие отчетсене шифрланă файлсемпе ярса пама май парать. Вĕсене электронлă цифрăпа алă пусаççĕ (хут çине пичетлеме кирлĕ мар). Шифрланă отчет материалне налук тӳлекен хăй тата налук органĕсем кăна вулама пултараççĕ. Кунсăр пуçне ăна офисран тухмасăрах, инспекцие пымасăрах ярса пама пулать.

Отчетсене Интернет урлă ярса пама тытăннă май налук тӳлекенсем валли чылай электронлă информаци услугисем пур. Кусем вĕсем налук тӳлекенсене вĕсем налук тӳлессипе хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлани пирки информацие электронлă майпа çитересси, тӳлевсен тĕрĕслевне ирттересси, налук законодательствинчи улшăнусем пирки пĕлтересси, налук тӳлекенсен ыйтăвĕсене сӳтсе явассин хальхи системине туса хурасси. Бухгалтери отчечĕсемпе налук декларацийĕсене электронлă майпа тăратни, хут çине пичетлесе илсе пынипе танлаштарсан, чылай меллĕрех:

– ĕç вăхăчĕ перекетленет;

– пĕр ĕçе икĕ хут тăвассинчен хăтарать;

– отчетсенче йăнăшсем пулмаççĕ;

– ярса панă отчета йышăнни пирки пĕлтереççĕ;

– информаци вăрттăнлăхĕ.

Паянхи куна пур йышши налук тата бухгалтери отчет документсене те электронлă майпа ярса пама май пур. Малта пыракан технологипе усă курас шăхăшлисен йышĕ кунсерен тенĕ пекех хушăнса пырать. Çак вăхăта 309 организаци (пĕтĕм йышран 41,5 проценчĕ) тата 17 уйрăм предприниматель (1,3 процент) çыхăнăвăн ятарлă операторĕсемпе килĕшӳсем тунă, отчетсене çыхăну каналĕсемпе ярса параççĕ.

Налук тата бухгалтери отчет документсене çыхăну каналĕсемпе ярса пама тытăнас тетĕр пулсан, компьютер кирлĕ тата Интернетпа çыхăнтармалла. Кайран вара çыхăнăвăн ятарлă операторĕпе килĕшӳ тумалла.

Чăваш Республикин территорийĕнче Управлени килĕшӳ тунă çыхăну операторĕсем тăваттă:

ЗАО «Инфанет», ООО «Интернет Центр», ООО «Аудиторская компания» «Эталон» , ЗАО «Удостоверяющий центр ekey.ru».

Çыхăнăвăн телекоммуникаци каналĕсемпе усă курма тытăнассипе, отчетсене çыхăнăвăн телекоммуникаци каналĕсемпе ярса пама тытăнассипе консультацисем ирттерме тата практикăлла пулăшу пама район территорийĕнче ООО «Виктория плюс» консультаци пунктне уçнă.

Раççей федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ çавна аса илтерет: Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 80-мĕш статйин 3-мĕш пункчĕн 2-мĕш абзацĕнче палăртнă тăрăх, налук тӳлекенсем, кунпа пĕрлех çĕнĕрен йĕркеленнĕ е реорганизаци тунă организацисем те, енчен те вĕсенче ĕçлекенсен хисепĕ кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 100 çын ытларах пулнă пулсан, налук декларацийĕсене (расчетсене) çирĕплетнĕ форматсемпе электронлă майпа тăратма тивĕç. Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн паттшалăх вăрттăнлăхĕ пулса тăракан информацие урăх йĕркепе тăратма пăхнă пулсан, кăна электронлă майпа усă курассинчен хăтараççĕ. Ку йĕрке 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕрет, тепĕр 4 уйăхран.

Информаци ылмашăвĕн участникĕсем, налук декларацийĕсене çыхăнăвăн телекоммуникаци каналĕсемпе электронлă майпа тăратасси пирки эсир налук инспекцийĕнче е Раççей федераллă налук службин Чăваш Республики тăрăх управленийĕн сайтĕ çинче (www.r21.nalog.ru) «Налук отчетлăхĕ» пайра паллашма пултаратăр.

Кунпа пĕрлех çавна та каласа хăварасшăн. Енчен те налук тӳлекен отчетсене телекоммуникаци каналĕсемпе тăратать пулсан, вăл хăйĕн персонифицированнăй даннăйĕсемпе кирек хăш вăхăтра та, кирек хăçан та паллашма пултарать (налуксем, тĕрлĕрен тӳлевсем, пенисемпе штрафсем енĕпе, бюджетпа операцисем ирттерессипе, отчетлă çулталăкра тăратнă бухгалтерипе налук отчетлăхĕпе т. ыт. те). Кунсăр пуçне налук тӳлекен налук органĕнчен электронлă майпа нормативлă право акчĕсемпе килĕшӳллĕн налуксемпе тӳлевсем пирки калакан законодательствăна кĕртнĕ улшăнусем пирки информаци илсе тăрать.

Налук тӳлесе тăракансене пурне те çĕнĕлле ĕçлеме тытăнма, налук тата бухгалтери отчечĕсене çыхăну каналĕпе 2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен ярса пама тытăнма сĕнетпĕр. Сирĕн вара çĕнĕ технологипе ĕçлесе пăхма, унăн лайăх енĕсене хаклама вăхăт пур-ха.

И. ЕРЕМЕЕВА,
налук инспекцийĕн налук тӳлекенсемпе ĕçлессин, вĕсене регистрацилессин тата учета илессин ертсе пыракан специалист-эксперчĕ.